З. А. Андреева

**Чăваш алфавичĕпе çырулăхне туса хуни. Кĕнекесем куçарни. Чăвашсен илемлĕ литератури**

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн руководителĕ И. Я. Яковлев тунă пысăк ĕçсенчен пĕри вăл – чăваш алфавичĕпе çырулăхне туса хуни пулать. Чăваш алфавитне вырăс саспаллисемпе усă курса тума йышăннă, мĕншĕн тесен çав ĕç – Яковлев хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕнче тума ĕмĕтленнĕ ĕç – чăвашсене вырăс культурипе хăвăртрах та çăмăлтарах паллашма май парĕ тесе шутланă.

Нумай вăхăт хушши тимлĕн ĕçленĕ хыççăн 1871 çулта чăваш алфавитне туса хунă. Унта малтан 47 саспаллипе уйрăм паллăсем пулнă, каярахпа вара алфавита çăмăллатнă, саспаллисен хисепне чакарнă. Çапла вара 1938 çулччenех пĕртте тенĕ пекех улшăнмасăр тытăнса тăнă чăваш алфавичĕ пулса тăнă, хăшпĕр саспаллисем чăваш алфавитĕнче çак таранччenех юлнă.

И. Я. Яковлев ĕçсене унпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем пысăка хурса хакланă. Çапла Н. И. Ильмикский чăваш алфавитне "Яковлев алфавичĕ" тесе ят панă. Чĕмпĕрти хĕрачасен гимназийĕн директорĕ Годнев чăваш алфавитне "питĕ лайăх алфавит" тесе шутланă, ăна лингвистикăн ун чухнехи требованийĕсене шута илсе тунă, унта нихăш сасса та темиçе саспаллипе палăртмалла туман, тенĕ.

Чăваш алфавитне туса хунипе тата ăна лайăхлатса пынипе И. Я. Яковлев хăйĕн халăхне культура тĕлĕшĕнчен малалла аталантарса пыма питĕ лайăх май туса панă. Çапла вара И. Я. Яковлев хăйĕн халăхне культура тĕлĕшĕнчен çӳле хăпартмалли вăйлă хĕçпăшал туса панă. Чăваш халăхне вĕрентес тата воспитани парас ĕçре тăван чĕлхе пысăк вырăн йышăнса тăнине вăл лайăх пĕлнĕ. И. Я. Яковлев çапла çырнă:

"Чĕлхе хăйне тунă халăхпа пĕрле çеç вилет; халăх хăйĕн тăван чĕлхине мантăр тени вăл çав халăха вĕлерес тенипе пĕрех пулать. Истори тĕлĕшĕнчен уйăрăлса хăйне уйрăм пурнăçпа пурăнакан кашни халăх сĕм авалтанпах хăйен туйăмĕсен ăнланăвĕсен тата идейисен кĕлеткине (скелетне) илсе пырать,

вĕсене вăл хăйĕн ăстăнĕн вăйĕсемпе тата майĕсемпе усă курса тунă, вĕсем халăхпа пĕрле çеç вилĕç. Чĕлхе вăл çав ăстăн пуянлăхĕн хуппи кăна пулса тăрать, анчах та çав хупă хăйĕн ăшчиккипе пĕрле ӳссе ларать, унтан уйăрăлмасть".

И. Я. Яковлев алфавит туса хунипе тата букварь çырса хатĕрленипе чарăнса тăман. Вăл çав алфавитпа букваре вĕренекен чăваш ачисем мĕнле хăвăрт та çăмăл ăнланма пултарнине тĕрлĕ çынсем урлă тĕрĕсленĕ, çав алфавитпа букварĕн лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртма тăрăшнă. Опыт çакна кăтартса панă: И. Я. Яковлев тунă алфавитпа вăл çырнă букварь унччен пулнă алфавитпа букварьтен нумай лайăхрах пулнă, вĕсене чăваш халăхĕ çăмăл ăнланнă. Çавăнпа та И. Я. Яковлев алфавитне те, вăл тăван чĕлхепе пичетлесе кăларнă кĕнекесене те чăвашсем юратса вуланă. Çаксене пула вара чăвашсен литература чĕлхи çуралса ӳссе, малалла аталанас май пулса тăнă.

И. Я. Яковлев алфавичĕ пирки часах вăйлă кĕрешӳ пуçланса кайнă. Çав алфавита хирĕç чи малтан тата пуринчен ытла хăшпĕр приходсенчи чăваш пупĕсем кĕрешнĕ.

Мельников ятлă пĕр çын, каярахпа белогвардеец пулса тăнăскер, 1903 çулта çапла çырнă: "Чăваш культури пулман та, пулас та çук. Пирĕн чăваш чĕлхине сыхласа тăмалла мар, чăваш чĕлхипе литература кăлармалла мар, вăл чăвашсем хушшинче вырăссенчен уйăрăлас шухăш-кăмăл сарать, вĕсене хăйсем çинчен ытлашши шухăшлаттарать. Пирĕн çав йăхăн лайăх пахалăхĕсене – тӳрĕ кăмăллă пулнине, тирпейлĕхне, пурне те пĕлме тăрăшнине, çĕр ĕçне юратнине сыхласа хăварса аталантармалла, – çакă ĕнтĕ, пирĕн шухăшпа, чиркӳпе шкулăн чăн-чăн задачи пулса тăрать", тенĕ.

Чăваш пупĕсенчен чăваш эсерĕсем те юлман. Яковлев алфавитне хирĕç пыракансем пурте çапла шутланă: чăвашла кĕнекесене вырăс алфавичĕпе усă курса çеç пичетлес пулать, урăх нимĕнле саспаллисем те шухăшласа кăлармалла мар, тенĕ.

Алфавит туса хуни чăваш çырулăхĕн историйĕнче питех те пысăк событи пулса тăнă. И. Я. Яковлев, хăйĕн алфавичĕпе кĕнекисене темĕн пекех

критикăланине пăхмасăрах, кĕнекесем кăларас ĕçе пăрахман. Ĕлĕкрех чăвашсем тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесене вулама юратман пулсан, шкулсенчен хăранă пулсан, И. Я. Яковлев алфавит шутласа кăларса кĕнекесем пичетлеме пуçласан, ĕç пĕтĕмпех улшăнса кайнă. Чăвашсем чăвашла кĕнекесене интересленсе вуланă, чăваш шкулĕсене кăмăлланă, унта хăйсен ачисене ирĕклĕнех янă.

Ун чухнехи вырăс обществин малта пыракан пайĕ, уйрăмăнах, малта тăракан интеллигенци – Чĕмаĕр кĕпĕрнинчи халăх шкулĕсен директорĕ И. Н. Ульянов, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинари директорĕ Н. И. Ильминский тата ыт. те И. Я. Яковлевăн халăха вĕрентсе çутта кăларас тĕлĕшпе тăвакан ĕçĕсене пĕтĕмпех ырланă. Çакă И. Я. Яковлева хăй пуçласа янă ĕçе сыхласа хаварма май панă.

Аллă çул хушши педагогика енĕпе ĕçлесе, И. Я. Яковлев чăваш чĕлхипе кĕнекесем нумай пичетлесе кăларнă. И. Я. Яковлев тăрăшнине пула, чăвашсенчен поэтсем, вырăсларан чăвашла ăста куçарма пултаракан çынсем ÿссе çитĕннĕ.

Рекеев хăйĕн асаилĕвĕсенче çакна кăтартса парать: Яковлев чăвашла кĕнекесене питĕ тĕплĕн редакциленĕ, вĕсене вăл темиçе хут тÿрлетнĕ, çак ĕçе нумай çынна хутшăнтарнă. "Иван Яковлевич тĕрĕс куçарма тата яка чĕлхепе куçарма тăрăшнă", тет Рекеев.

Чăваш литературине пуçарса янă К. В. Иванов – вилĕмсĕр "Нарспи" поэмăн авторĕ – Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, вăл И. Я. Яковлевăн чи лайăх ученикĕ пулнă.

Федоров çырнă «Арçури" пек произведенисене И. Я. Яковлев тăрăшнипе çеç пичетлесе кăларма май пулнă.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче чăвашсен литература чĕлхи аталанса, шăрçаланса пынă, унта чăвашла çырнă тата вырăсларан чăвашла куçарнă произведенисене пичетлесе кăларнă, унта чăваш литератури классикĕн К. В. Ивановăн "Нарспи" поэмине чи малтанхи хут пичетлесе кăларнă. Чĕмпĕрти

чăваш шкулĕ чăваш юррисене, халапĕсене, ваттисем каланисене тата ыт. те питĕ тăрăшса пухнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци умĕн чăвашсен хăйсен алфавичĕпе çырулăхĕ пулнă пулсан, вĕсен чылаях çирĕпленсе çитнĕ литература чĕлхи пулнă пулсан, çакăншăн пирĕн чи малтан И. Я. Яковлева тата унăн Чĕмпĕрти чăваш шкулне тав тăвас пулать.

И. Я. Яковлев аллă çул хушши туса пынă обществăллă-педагогикăллă ĕçсем пысăк результатсем панă. Вĕсем чăвашсен культура шайне хăпартнă, вĕсен пурнăçĕнче пур енчен те палăрса тăнă. И. Я. Яковлев чăвашсен вĕренсе çутта тухас шухăш-кăмăлĕсене вăратнă. И. Я. Яковлев системи тата вăл кăларнă кĕнекесем чăвашсене аслă вырăс халăхĕпе пĕрлешме, унпа туслă пурăнма, унăн малта пыракан культурине вĕренсе йышăнма нумай пулăшнă.

И. Я. Яковлев туса хунă çырулăх чăвашсене совет влаçĕ пуçлансанах хăйсен культурине – форми енчен нациллĕ, содержани енчен социализмлă культурине малалла вăйлăн аталантарас ĕçе тӳрех хутшăнма май панă.

*Андреева, З. А. Чăваш алфавичĕпе çырулăхне туса хуни. Кĕнекесем куçарни. Чăвашсен илемлĕ литературиi // Андреева, З. А. Иван Яковлевич Яковлев тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ / З. А. Андреева. – Шупашкар, 1949. – С. 24-27.*